**Юрра юрату çуратать (сăвă)**

Савнишĕн эп пултăм сар каччă,
Тăшманшăн эп пултăм арслан;
Ун чух эп салтакчĕ, çартаччĕ,
Çĕре тăрмалатчĕ тăхлан.

Тăшманăн кун-çулĕ ăнмарĕ, —
Вутра-и çунмарĕ тăшман!
Ман шанчăк вутра та çунмарĕ, —
Тен, эсĕ çунмашкăн хушман.

Виç хут та эп вилтĕм, сывалтăм,
Юнпа чĕнтĕрлерĕм юра.
Çĕр хут та çĕрпе эп хуплантăм,
Çук, çук, çĕр хуплаймĕ юрра.

Тăшман аллăма татса юлчĕ,
Пуçа касма тăчĕ тăшман.
Вут вăрçă чĕрем çулне пӳлчĕ,
Чĕремçĕм вăл юрă вĕт ман.

Пулать вăл — пуçа та касмашкăн,
Чармашкăн пулать чĕрене.
Тăшманăн вăй çитмĕ чармашкăн,
Татмашкăн поэт юррине.

Поэт вăл — хăй пурнăç, хăй юрă,
Юрра юрату çуратать.
Апла тăк, чĕремçĕм ман, курăр,
Сӳнми юрату çеç усрать.

*Урташ, В. Юрра юрату çуратать : [сăвă] // Урташ В. Ăраскал : суйласа илнĕ сăвăсемпе поэмăсем / В. Урдаш. – Шупашкар, 1974. – С. 132-133.*